Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

80 (7720) № ✻ Юн кун, 2009 ҫулхи октябрӗн (юпа) 7-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Ҫуллахи сезон хупӑнчӗ

## Район хаҫачӗн парнисем – тивӗҫлисенче

Ирхине вунӑ сехетре пуҫлама палӑртнӑ ӑмӑртӑва шкул ачисем чылай маларах пуҫтарӑнчӗҫ. Муркаш районӗн ӗҫченӗсем вӗри чейпе сӑйлама пысӑк сӑмавар хатӗрлерӗҫ, шалти ӗҫсен пайӗн патшалӑх ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн сотрудникӗсем тӗп урампа иртекен транспортӑн ҫулне пӳлчӗҫ, вӗрентӳ пайӗн специалисчӗсем йӗркелӳ ӗҫӗсемпе аппаланчӗҫ, райхаҫат редакцийӗнче ӗҫлекенсем призерсем валли туяннӑ хаклӑ парнесене ФСК умӗнче майласа хучӗҫ. Ҫапла пӗр харӑссӑн кашни хӑйӗн ӗҫне пурнӑҫланипе ӑмӑрту вӑхӑтра пуҫланчӗ.

(Вӗҫӗ 4-мӗш стр.).

**Сӑн ӳкерчӗксенче: Чуманкасси шкулӗнчи учительсем 1-мӗш вырӑна тухрӗҫ; ҫӗнтерӳҫӗсене район пуҫлӑхӗпе Ю.А. Ивановпа райхаҫат тӗп редакторӗ А.И. Тихонов парнесемпе чысларӗҫ; ӑмӑртӑва хутшӑнакансем.**







Партисен пурнӑҫӗнчен

## «Раҫҫей, малалла!» статьяна сӳтсе яватпӑр

Пӗтӗм Раҫҫейри «Единая Россия» партин Муркашри вырӑнти уйрӑмӗнче 1241 член. Пуҫламӑш организацисем 51 шутланаҫҫӗ. Арҫынсем 35 процент, хӗрарӑмсем 65 процент.

Сентябрь уйӑхӗнче пуҫламӑш организацисенче пӗрлехи пухусем иртрӗҫ. Вӗсенче партири йӗркелӳ тата пропагандӑпа агитаци ӗҫне вӑйлатас ыйтусене пӑхса тухнӑ.

Иртнӗ эрне кун партин Муркашри уйрӑмӗн черетсӗр конференцийӗ пулчӗ. Делегатсем Раҫҫей Президенчӗн Д.А. Медведевӑн «Раҫҫей, малалла!» статйине тӗплӗн тишкерчӗҫ. Парти умне лартнӑ задачӑсене пурнӑҫлассипе ҫине тӑрса ӗҫлеме кирлине палӑртрӗҫ.

Президент статйине пуҫламӑш организацисенче анлӑн сӳтсе явма палӑртнӑ.

**Хамӑр инф.**

Пулни-иртни

## Вут-ҫулӑм витӗр

Пурсӑмӑра та шухӑшлаттаракан тӗп хӑрушлӑх пирӗншӗн пушар пулнине пурте пӗлетпӗр пулин те, пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене сӗмсӗррӗн пӑсни тавӑрма май ҫук инкексем патне илсе ҫитерет. Ҫакӑн пирки эпир районта пурӑнакансене пӗлтерсе-асӑрхаттарсах тӑратпӑр. Анчах...

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче 15 сехет те 50 минутра 37-мӗш номерлӗ пушар чаҫӗн хуралне Мӑн Сӗнтерти пӗр хваттерте пушар тухни пирки пӗлтерӳ ҫитрӗ. Ҫийӗнчех вырӑна тухрӑмӑр. Вӑй илнӗ «хӗрлӗ автана» пысӑк сиен тӑвасран вӑхӑтра ҫитсе ҫӑварлӑхларӑмӑр. Пушар сӑлтавӗсемпе тата ӑна сӳнтерессипе туса иртернӗ ӗҫсем ҫакна кӑтартрӗҫ. «Хӗрлӗ автан» иленнӗ хваттерте инкек вӑй илнӗ тӗле 4 ҫул ҫурӑри ача пулнӑ. Инкек пирки пушар хуралне пӗлтерсенех ирӗке кайнӑ ҫулӑмпа кӗрешме пуҫланӑ ҫынсем хваттерте пӗчӗк ача пуррине пӗлнӗ. Мӗн тумалла? Мӑн Сӗнтерти ҫӑкӑр заводӗнче ӗҫлекен Алексей Пальков пушар хуралӗсем килсе ҫитессе кӗтмесӗрех ҫунакан хваттере кӗрсе каять, ачана вӑхӑтра усӑ сывлӑша илсе тухать, унӑн пурнӑҫне сыхласа хӑварать.

Халӗ пушар сӑлтавӗсене тӗпчессипе ӗҫсем малалла пынипе пӗрлех А. Палькова чысласси те кун йӗркинче тӑрать.

**И. СМИРНОВ,**
**районти патшалӑх пушар надзорӗн ертӳҫи.**

Районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче

## Кӗр ҫитрӗ, пӳлмесем тулли

Районти ҫӗр ӗҫченӗ уй-хир ӗҫӗсене вӗҫлерӗ тесен те юрамалла. Юпа уйӑхӗн 6-мӗшӗ тӗлне районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсем тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене мӗн пур лаптӑк ҫинчен пуҫтарса кӗртрӗҫ. Пурӗ – 12548 гектар.

Районти тыр-пулӑн вӑтам тухӑҫӗ гектар пуҫне 24,9 центнер пулнӑ. Ку вӑл иртнӗ ҫулхи ҫак тапхӑртинчен 2,6 центнер пысӑкрах.

12 пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхпа хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем алла илнӗ вӑтам тухӑҫ районӑн вӑтам кӑтартӑвӗнчен пысӑкрах. Чи сумлӑ тухӑҫ кӑҫал «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче – гектар пуҫне 50 центнер. Фабрика уй-хирӗсенче кӗрхи тулӑ кӑҫал гектартан 67 центнер тухӑҫ панӑ.

## Ҫӗр улми

Район кӑҫал, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 500 гектара яхӑн ҫӗр улми ытларах лартрӗ. Ӑна технологие пӑхӑнса пӑхса ӳстерсе кӗр ҫитсен те агротехнологиллӗ вӑхӑтра пуҫтарса кӗртрӗҫ. Ҫӗр улмин вӑтам тухӑҫӗ районта 122 центнер. Уйрӑмах пысӑк тухӑҫ «Ударник», «Оринино», Чапаев ячӗпе хисепленекен тата А. Толстовпа С. Яргиев хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче.

## Выльӑх кӑшманӗ

Кӑҫал районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенчен тӑваттӑшӗнче кӑна («Восток», «Герой», «Оринино», «Свобода») выльӑх кӑшманӗ лартса туса илнӗ. Пӗтӗмпе 61,1 гектар. Чи пысӑк лаптӑк – 24 гектар – «Свобода» хуҫалӑхра.

Выльӑх кӑшманӗн вӑтам тухӑҫӗ кӑҫал гектар пуҫне 195,9 центнер. Чи пысӑк тухӑҫ – 270 центнер – «Оринино» ял хуҫалӑх производство кооперативӗнче.

**Хамӑр инф.**

## Мирлӗ пурнӑҫри паттӑрлӑх

Паттӑрсем ҫуралмаҫҫӗ, вӗсем кулленхи пурнӑҫра палӑраҫҫӗ. Ҫакна эпир тӑтӑшах куратпӑр. Иртнӗ ҫу кунӗсенче кунашкал тӗслӗх Уйкас Янасал ял тӑрӑхӗнчи Купӑрляра та пулса иртрӗ.

Купӑрляри сӗт фермине выльӑх пӑхакан 48 ҫулхи Г. Никаноров кӑнтӑр иртни 3 сехетре ӗҫе тухса утать. Ҫул ял пӗви патӗнчен иртет. Ҫакӑнта ҫитсен арҫын пӗве хӗрринче катамаран ҫине ларма пикенекен пӗчӗк ачасем тӑрмашнине асӑрхать. Унччен те пулмасть, вӗсем кӑшкӑрса пулӑшма чӗннине илтет те унта чупать. Вӑл ҫитнӗ ҫӗре шыва кӗрсе ӳкнӗ ача куҫа курӑнмастчӗ ӗнтӗ. Кашни ҫеккунчӗ шутра. Г. Никаноров ним шутласа тӑмасӑр шыва сикет. Ачана шыраса тупса ҫырана илсе тухать. Шӑпӑрлансене кӳршӗри медсестрана чӗнме хушса ачана пирвайхи пулӑшу парать. Тав Турра! Август уйӑхӗнче 4 ҫул тултармалли Дмитрий Михайлов куҫне уҫать, сывлаcа ярать.

Паян 4 ҫулхи Дима ача садне ҫӳрет, Геннадий Владиславович Никаноров ҫӑлавҫӑ вара кулленех тӑван хуҫалӑх экономикине вӑйлатассишӗн Ильич яч. хис. хуҫалӑхӗн сӗт ферминче вӑй хурать. Ӑна та тивӗҫлӗ награда парасса шанатпӑр.

**А. БЕЛОВ.**

Тыр-пул уявӗ умӗн

## Аш-пӑш сутаканӑн мӗн пӗлмелле?

***Вӑхӑт ыткӑнӑвӗпе пыма питех те йывӑр пулсан та, хресчен кун-ҫул уттинчен юлмасӑр аталанса пыма тӑрӑшать. Тӑрӑшать те хӑй умне лартнӑ тӗллевсене вӑхӑтра пурнӑҫлать. Акӑ пӗтӗм тӗнчери экономика кризисне, хулапа ял хушшинчи танмарлӑха, ҫут ҫанталӑк кӑларса тӑратнӑ чӑрмавсене пӑхмасӑрах ҫӗр ӗҫченӗ черетлӗ ял хуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑ вӗҫлесе пырать. Ҫакна вырма ӗҫӗсем хыҫала юлни те курӑмлӑ ҫирӗплетсе парать. Ҫитес шӑмат кун, юпа уйӑхӗн 10-мӗшӗнче, Тырпул уявӗ. Ҫавна май Муркашра иртекен хӑйсен праҫникне ял ҫыннисем те активлӑ хутшӑнасса шанатпӑр. Анчах йӗрке тени кунта та кирлӗ. Уяв пасарне аш-пӑш, выльӑх-чӗрлӗхсен кайӑк-кӗшӗк тата вӗсенчен хатӗрленӗ продукцие сутма тухакансен мӗн пӗлмелле-ха, мӗн асра тытмалла? Ҫакӑн пирки пулчӗ те пирӗн кӗске калаҫу районти выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен станци пуҫлӑхӗн ҫумӗпе Олег Александрович ВОРОБЬЕВПА.***

**– Выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансем те – Тыр-пул уявӗн хуҫисем. Апла пулсан вӗсем те ҫывхаракан уявра туллин савӑнма пултараҫҫӗ.**

– Ҫапла. Сирӗнпе эпӗ пӗтӗмпех килӗшетӗп. ЧР Президенчӗ иртсе пыракан ҫулталӑка Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ тесе палӑртрӗ, ҫак пӗлтерӗшре тыр-пул акса ӳстерекенпе выльӑх-чӗрлӗх пӑхакана пӗр ҫӳллӗше лартрӗ. Ку савӑнмалли пулӑм кӑна. Ҫавӑнпа та ҫитес шӑмат кунхи уява выльӑх-чӗрлӗх пӑхакансемпе вӗсенчен продукци туса илекенсем те уй-хир ӗҫченӗсемпе пӗр шайрах хутшӑнасса шанатпӑр. Шанатпӑр та ҫывхаракан уявра саламлатпӑр.

**– Пиtӗ аван, анчах пасара выльӑх-чӗрлӗх е унӑн продукцине сутма илсе тухакан валли те хӑйӗн йӗрки пур-тӑр. Кунта мӗн палӑртма пултаратӑр?**

– Тыр-пул уявне выльӑх-чӗрлӗхпе унран хатӗрленӗ продукцие сутма илсе тухакан паян та, ытти чухне те суту ӗҫне саккунпа килӗшуллӗн ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама ҫумра 4-мӗш номерлӗ ветсправка пулмалла. Унта пирӗн патӑмӑра килнӗ ял ҫыннин выльӑхӗпе продукцийӗ ветеринарипе санитари экспертизи витӗр тухнине тата вӑл усӑ курма хӑрушӑ маррине ҫирӗплететпӗр. Асӑннӑ ветсправка выльӑх-чӗрлӗхпе кайӑк-кӗшӗке тата вӗсенчен илнӗ аш-какая, сӗте, пыл сутма та кирлӗ. Каларӑм ӗнтӗ, ҫак йӗрке вӑл пӗр кунлӑха ҫеҫ мар. Пасарсенче ӑна пӑхӑнассине эпир тӑтӑшах тӗрӗслетпӗр. Йӗркене пӑсакансен вара административлӑ майпа явап тытма тивет. Кун ҫумне ҫакна та хушса каласа хӑвармалла: сутма тухаканӑн ҫумра санитари паспорчӗпе ятарлӑ тум-тир (халат, калпак, ҫанӑ ҫине тӑхӑнмалли-сем) пулмалла. Уяв кунӗнче те пирӗн тӗрӗслевсемсӗр пулмӗ.

**– Тавтапуҫ. Ял ҫыннисем уявра йӗркене пӑхӑнасса шанатпӑр.**

**А. ПЕТРОВ калаҫнӑ.**

Следстви управленийӗнчен

## Ӗҫсене пӗтӗмлетрӗмӗр

2007 ҫулхи авӑн уйӑхӗн 7-мӗшӗнче Раҫҫейре РФ прокуратури ҫумӗнче Следстви комитетне туса хучӗҫ. Ҫакӑнпа пӗрлех йӗркеленнӗ Етӗрнери районсем хушшинчи следстви пайӗ иртнӗ кунсенче икӗ ҫул тултарчӗ. Ҫавӑнпа малтанхи пӗтӗмлетӳсем тума та юрать. Пирӗн тытӑмра ытларах ҫамрӑксем ӗҫлеҫҫӗ пулсан та, шанӑҫ паракан ӗҫ кӑтартӑвӗсем пур.

Икӗ ҫул хушшинче прокуратура органӗсен следователӗсене шанса панӑ пӗр преступленин те уҫа парассине вӗҫне ҫитермесӗр юлман, пуҫарнӑ пӗр уголовнӑй ӗҫ те «хупӑнман».

Кӑҫал кӑна пирӗн следовательсем Муркаш районӗнче тунӑ преступленисемпе 19 ҫын тӗлӗшпе 17 уголовнӑй ӗҫе суда ҫитернӗ. Вӗсем ҫын вӗлернӗ, мӑшкӑлланӑ е ытти йывӑр преступленисем тунӑ.

Пирӗн ӗҫре ҫамрӑк следовательсем пуҫарулла пулни обществӑри право йӗркине пӑхӑнасси-сыхласси малашне те тивӗҫлӗ шайра юласса шантарать.

**С. САВЕЛЬЕВ,**
**Етӗрнери районсем хушшинчи следстви пайӗн ертӳҫи.**